Артем МОИСЕЕВ,
Чурачăк шкулĕ

# Хусанкая халалласа

Шăп пĕр ĕмĕр каялла
Сиктерме ялĕнче
Таврана сас парса
Пĕчĕк Петĕр çуралчĕ.
Вулама та, çырма
Пĕчĕклех вăл пуçларĕ,
Улттăра чух вара
"Нарспие" хăй вуларĕ.

Çамрăклах Петĕр тус
Нушине нумай тӳсрĕ,
Вăрçине те курчĕ,
Вилĕмпе те тĕл пулчĕ.
Çав-çавах аптрамарĕ,
Чир-чĕре парăнмарĕ.
Малаллах тапаланчĕ,
Сăвăсем нумай çырчĕ.

Вырăса юратма,
Тутарпа туслашма,
Чăвашла калаçма
Вĕрентсе вăл хăварчĕ.
Çĕршыва Хусанкай
Чĕререн хисеплерĕ.
Ăсĕпе, ĕçĕпе
Çынсене тĕлĕнтерчĕ.

Чăвашла, вырăсла,
Тутарла, пăлхарла
Сăвăсем анчах мар -
Романсем пичетлерĕ.
Пирĕнпе юнашар
Хусанкай текех çук,
Анчах ун ĕçĕсем
Асăмран тухас çук.